# Сатаҫсем.

Хĕллехи каç. Пиҫĕшпе шăлнĕ пĕҫĕк аҫасем пÿртре лараççĕ. Ĕç çук. Выҫас килмест. Мĕн туса вăхăт иртересха.

— Тавайха, сатаҫсем тăвăпăр, тет пĕри.

— Иурĕ.

— Ну, вот, шутласа кăларха. Пĕр аҫан икĕ пус пулнă. Тепĕр аҫи пынă та унăн пĕр пусне туртса илсе кайнă Мĕн пулнă?

— Пĕр пус.

— Çук, апла мар. Çапăçу пулнă. Çапăçусăр парман ĕнтĕ вăл туртса илнĕ укçине.

— Çапла пуҫ çав. Халĕ тата ĕнтĕ епĕ сана сатаҫ парам: виçĕ йĕкĕт çапăçпă, пĕрне вĕлернĕ. Миçе йулнă?

— Иккĕ.

— Çук, пĕлеймерĕн. Пĕри йулнă, иккĕшĕ тарнă.

— Тĕрĕс. Мĕнле пĕлеймерĕм çав епĕ. Итле: халĕ хаçатсем çинҫе уҫрештенисене тасатаççĕ, тенĕ. Пĕр уҫрештенирен виçĕ çынна тасатса кăларнă. Миçе çын ĕçсĕр йулнă?

— Виççĕ.

— Виççĕ мар çав.

— Пĕр çын та ĕçсĕр йулман, мĕншĕн тесен виççĕшĕ те урăх уҫрештенисене кĕрсе вырнаçнă.

— Епĕ калам еппин тата. Муççи муҫей 1 мăшăр çăпатана 3 сехет тăваť. Пайан вăл 2 мăшăр тунă. Вăл çăпата туса мĕн ҫухлĕ ларнăши?

— 6 сехет.

— Ултă мар, тăваттă. Вăл хушăра икĕ сехет кинемейпе вăрçса иртерҫĕ.

— Тĕрĕс. Халĕ ĕнтĕ есĕ шутласа кăлар. Кивçен паракан копператтивра 100 тенкĕ пулнă. Ăна илме 10 çын хут çырса панă— миçешер тенкĕ тивнĕ.

— Вуншар тенкĕ...

— Çук! Апла мар!

— Çапла.

— Апла мар.

— Суйатăн?

— Суймастăп. Пĕр пус та тивмен.

— Мĕнле апла?

— Çапла çав. 100 тенкине пĕтĕмпех шаҫу панă çĕре йанă та, ҫленсене пама нимĕн те йулман. Ф. П.